28-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 МАРТ 25 ВЫРСАРНИКУН 57(1808) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 3-мĕш фронт ҫарĕсен командующине

Совет Союзĕн Маршалне ТОЛБУХИНА

Фронт штабĕн начальникне Генерал-лейтенанта ИВАНОВА

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт ҫарĕсем, БУДАПЕШТРАН кăнтăр-хĕвеланăҫнерехре нимĕҫсен вунпĕр танковăй дивизийĕн атаки сене сирсе ярса тата оборонăра тăрса ҫапăҫса вĕсене халран янă хыҫҫăн, наступлени пуҫланă та нимĕҫ танкĕсен ушкăнне аркатса тăкнă, 100 километр ытла сарлак ĕш фронтпа 70 километр малалла кайнă.

Наступлени туса пырса, пирĕн ҫарсем СЕКЕШФЕХЕРВАР, МОР, ЗИРЕЗ, ВЕСПРЕМ, ЭНЬИНГ хулисене туртса илнĕ, ҫавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 350 пункта ытла йышăннă.

Фронт ҫарĕсем кунти ҫапăҫусенче тăшманăн 6.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, 745 танкпа хăй тĕллĕн ҫÿрекен тупă, 800 тупă ытла тата ытти хĕҫпăшалпа ҫар пурлăхĕ нумай пĕтерсе тăкнă е тытса илнĕ.

Малта асăннă хуласене туртса илесшĕн ҫапăҫнă чухне ҫаксем чапа тухнă: ГЛАГОЛЕВ генерал-полковникăн, ЗАХВАТАЕВ генерал-лейтенантăн, ТРОФИМЕНКО генерал-полковникăн, ГАГЕН генерал-лейтенантăн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ генерал-майорăн, ДЕРЕВЯНКО генерал-майорăн, МИРОНОВ генерал-лейтенантăн, БИРЮКОВ генерал-майорăн, КОЗАК генерал-майорăн, ГОРЯЧЕВ генерал-лейтенантăн, КОЛЧУК генерал-майорăн, ЛАЗЬКО генерал-майорăн, ФИЛИППОВСКИЙ генерал-майорăн, ГНЕДИН генерал-майорăн, АРТЮШЕНКО генерал-майорăн, ЛАРИН полковникăн, БЛАЖЕВИЧ генерал-майорăн, СЕРЕГИН генерал-майорăн, ДЕНИСЕНКО генерал-майорăн, ВИНДУШЕВ полковникăн, ИВАНОВ генерал-майорăн, АФОНИН генерал-майорăн, МОШЛЯК полковникăн, МИХАЙЛОВ генерал-майорăн, КАРЛОВ генерал-майорăн, КОНЕВ генерал-майорăн, ПИСКУНОВ полковникăн, БАТЛУК полковникăн, НЕКРАСОВ генерал-майорăн, ЛИЛЕНКОВ генерал-майорăн, ФРОЛОВ генерал-майорăн, СЕРГЕЕВ полковникăн, ХОХЛОВ полковникăн, КУЛИЖСКИЙ генерал-майорăн, БУНЯШИН генерал-майорăн, ВЕЛИЧКО генерал-майорăн, ТЕРЕНТЬЕВ полковникăн ҫарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн НЕДЕЛИНАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ВОЗНЮКАН, артиллери генерал-майорĕн ЦИКАЛАН, артиллери генерал-майорĕн БРЕЖНЕВАН, артиллери генерал-майорĕн ЛЕБЕДЕВАН, артиллери генерал-майорĕн ЛИВАНСКИН, артиллери генерал-майорĕн ГУСЕВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн НЕСТЕРУКАН, артиллери генерал-майорĕн РАТОВАН, артиллери генерал-майорĕн ВЕЛИКОЛЕПОВАН, артиллери генерал-майорĕн БОБРОВНИКОВАН, ШЕЛКО полковникăн, РОШИЦКИЙ полковникăн, МИЛЬКОВСКИЙ полковникăн, ГОЦАК полковникăн, КИЙ полковникăн, ШПЕК полковникăн, ЛУПАНОВ полковникăн, ЖИВУЦКИЙ подполковникăн, НИЗКОВ подполковникăн, ЛЕОНОВ подполковникăн, МРУКАЛОВ майорăн, ГУЩИН полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй ҫарсен генерал-полковникĕн КРАВЧЕНКАН, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ШТРОМБЕРГАН, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн САВЕЛЬЕВАН, танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн ВОЛКОВАН, ГОВОРУНЕНКО генерал-майорăн, танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн АХМАНОВАН, РУССИЯНОВ генерал-лейтенантăн, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн ПАВЕЛКИНАН, СТЫЗИК полковникăн, ОЧАРОВ полковникăн, МИХНО подполковникăн, ЖИЛИН полковникăн, ОСТАПЕНКО полковникăн, ГРИБОВ полковникăн, ОБДАЛЕНКОВ полковникăн, САХАРОВ полковникăн, ИВАНОВ полковникăн, ЛУКЬЯНОВ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн СУДЕЦАН, авиаци генерал-майорĕн КОРСАКОВАН, ЗЛАТОЦВЕТОВ генерал-лейтенантăн, авиаци генерал-лейтенанчĕн СЧЕТЧИКОВАН, авиаци генерал-майорĕн ВИТРУКАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ТОЛСТИКОВАН, авиаци генерал-майорĕн ТИЩЕНКАН, авиаци генерал-майорĕн БЕЛИЦКИН, СМИРНОВ полковникăн, ИВАНОВ полковникăн, ТЕРЕХОВ полковникăн, НЕДОСЕКИН полковникăн, ДЕМЕНТЬЕВ полковникăн, УЛЬЯНОВСКИЙ полковникăн, ШАТИЛИН подполковникăн летчикĕсем; инженери ҫарĕсен генерал-полковникĕн КОТЛЯРАН, инженери ҫарĕсен генерал-майорĕн КИЯШКАН, ВОДОВАТОВ полковникăн, МАЛОВ полковникăн, ПОНИМАШ полковникăн, ЗАГРЕБИН полковникăн, БАБУРИН полковникăн саперĕсем; ҫыхăну ҫарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЕВАН, ШЕРВУД полковникăн, СУХИХ подполковникăн, АГАФОНОВ полковникăн, авиаци генерал-майорĕн МОРОЗОВАН, КОТКОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве паллă тăвас тесе, СЕКЕШФЕХЕРВАР, ВЕСПРЕМ тата малта асăннă ытти хуласене туртса илесшĕн ҫапăҫнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 24-мĕшĕнче, 21 сехет те 30 минутра пирĕн Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр ҫирĕм тăватă тупăпа ҫирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, малта асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, нимĕҫ танкĕсен ушкăнне аркатса тăкнăскерсене, питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи мартăн 24-мĕшĕ. № 306.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт ҫарĕсен командующине

Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА

Фронт штабĕн начальникне Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт ҫарĕсем, малалла наступлени туса пырса, паян, мартăн 24-мĕшĕнче, Силезире ОДЕР шывĕнчен хĕвеланăҫнерехре НЕЙССЕ хулипе ЛЕОБШЮТЦ хулине—нимĕҫсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ.

НЕЙССЕ хулипе ЛЕОБШЮТЦ хулине туртса илесшĕн ҫапăҫнă чухне ҫаксем чапа тухнă: ГУСЕВ генерал-полковникăн, КОРОВНИКОВ генерал-лейтенантăн, КУРОЧКИН генерал-полковникăн, БУХОВЕЦ генерал-лейтенантăн, КОВАЛЬЧУК генерал-майорăн, ГОНЧАРОВ генерал-майорăн, НОВОСЕЛЬСКИЙ генерал-лейтенантăн, ТРУБАЧЕВ генерал-майорăн, ШАРАБУРКО генерал-майорăн, ЗИНОВЬЕВ полковникăн, ПЫПЫРЕВ полковникăн, ГОВОРОВ генерал-майорăн, ЯСТРЕБОВ генерал-майорăн. СУХАРЕВ полковникăн, ЕФИМЕНКО полковникăн, ПОТАПЕНКО генерал-майорăн, НИКАНОРОВ полковникăн, КУЧЕРЕНКО полковникăн, ПЕТРЕНКО полковникăн, КАЗАРИНОВ полковникăн ҫарĕсем; ЛЕЛЮШЕНКО генерал-полковникăн, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн УПМАНАН, танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн БЕЛОВАН, КАРЕЦКИЙ полковникăн, танковăй ҫарсен генерал-лейтенанчĕн КОРЧАГИНАН, танковăй ҫарсен генерал-майорĕн КУЗНЕЦОВАН, КАРНЮШКИН подполковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн МИХАЛКИНАН, артиллери генерал-майорĕн ДОРОФЕЕВАН, артиллери генерал-майорĕн МЕНТЮКОВАН, артиллери генерал-майорĕн КАБАТЧИКОВАН, КОЗУБЕНКО полковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-майорĕн ПРОНИНАН, авиаци генерал-майорĕн АРХАНГЕЛЬСКИН, авиаци генерал-лейтенанчĕн РЯЗАНОВАН, авиаци генерал-майорĕн ГОРЛАЧЕНКАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн УТИНАН, НИКИШИН полковникăн, МАЧИН полковникăн, ЮЗЕЕВ полковникăн летчикĕсем; ГРОМЦЕВ полковникăн, БУЛАХОВ полковникăн, ПОЛУЭКТОВ полковникăн саперĕсем; ҫыхăну ҫарĕсен генерал-майорĕн ЯКОВЛЕВАН, ҫыхăну ҫарĕсен генерал-майорĕн НЕСТЕРОВАН, ШЕЛАМЫТОВ полковникăн, ОСТРЕНКО полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ҫĕнтерĕве паллă тăвас тесе, НЕЙССЕ хулипе ЛЕОБШЮТЦ хулине туртса илесшĕн ҫапăҫнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 24-мĕшĕнче, 22 сехет те 30 минутра пирĕн Тăван ҫĕршыв столици МУСКАВ, ҫĕр ҫирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр ҫарĕсене, малта асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван ҫĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, НЕЙССЕ хулипе ЛЕОБШЮТЦ хулине туртса илесшĕн пынă ҫапăҫусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă ҫапăҫнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван ҫĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн ҫапăҫса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕҫ захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи мартăн 24-мĕшĕ. № 307.

Ялхуҫалăх работникĕсен республикăри канашлăвĕ

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Эпир, Чăваш АССР-ĕнчи ялхуҫалăх работникĕсен канашлăвне пухăннă ҫынсем, Сире, аслă ҫулпуҫа тата учителе, Хĕрлĕ Ҫарăн чаплă полководецне, республикăри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен тата ялхуҫалăх работникĕсен ячĕпе хĕрÿллĕ салам яратпăр.

Ҫуракине тухас умĕн, ҫĕнтерÿ ячĕпе вăйлă тырпул туса илмелли ҫĕнĕ ялхуҫалăх ҫулĕ пуҫланас умĕн канашлăва пухăнса, эпир Тăван ҫĕршыв умĕнчи, гитлерла вăрă-хурахсене хăйсен йăвинче аркатакан чаплă Хĕрлĕ Ҫар умĕнчи хамăрăн тивĕҫе лайăх туйса тăратпăр. Тăшмана татăклăнах ҫĕнтермешкĕн нумай ҫапăҫмалла пулать-ха, нумай вăй хурса ĕҫлемелле пулать-ха. Эпир Сире, пирĕн аттемĕр, нимĕҫ захватчикĕсене пĕтĕмпех ҫĕнтерес ĕҫе хамăрăн тÿпене пĕтĕмпех хывма сăмах паратпăр.

Ҫураки вăхăчĕ—колхозлă ялшăн ответлă тапхăр ҫывăхарса килет. Эпир, Чăваш республикинчи социализмлă ялхуҫалăхĕн работникĕсем, ҫав хĕрÿллĕ тапхăра тивĕҫлипе кĕтсе илме хатĕрленетпĕр—вăрлăх, инвентарь, тракторсем, лашасем хатĕрлетпĕр, хире тислĕк кăларатпăр, агротехника кружокĕсенче вĕренетпĕр. Эпир Сире, тăван Иосиф Виссарионович, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярса, ҫуракине кăтартуллăн хатĕрленсе ăнăҫлăн ирттерме, хамăр хирсенче вăйлă тырпул туса илме тата государствăпа колхозсен пÿлмисене чи лайăх тыră тултарма сăмах паратпăр.

Ирĕке кăларакан ҫар умĕнчи хамăрăн аслă тивĕҫе пурнăҫа кĕртсе пырса, эпир обществăллă выльăх-чĕрлĕхсен хисепне тата ытларах ÿстеретпĕр, Тăван ҫĕршыва какай, ҫу тата выльăх-чĕрлĕхĕн ытти продукчĕсене нумай паратпăр. Хамăрăн паттăр воинсене, совет тылĕнчи чаплă боецсене тăрантарапăр, тумлантарапăр!

Хаклă Иосиф Виссарионович! Пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн савăнăҫлă кун—Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики 25 ҫул тултарнă кун—ҫывăхарса килет. Ҫав иртнĕ 25 ҫул ҫине, чăваш халăхĕ чечекленсе аталанса ҫынă вăхăт ҫине ҫавăрăнса пăхсан, пирĕн чĕресем ҫав тери савăнса каяççĕ. Малалла, хамăрăн телейлĕ пуласлăх ҫине пăхсан—пирĕн чĕресем хамăр Тăван ҫĕршыва, партие, Сире, пирĕн хаклă Сталин, пысăк тав тăваççĕ. Ҫавăн пек пуласлăхшăн эпир паян нкĕ хут, виҫĕ хут ытларах вăй хурса ĕҫлетпĕр, ҫĕршывпа фронт валли тыră, промышленность валли чĕртавар туса хатĕрлетпĕр, гитлерла йыткĕтĕвĕсене хăвартрах аркатса тăкмашкăн хамăр Хĕрлĕ Ҫара пулăшатпăр.

Хаклă Иосиф Виссарионович. Сире эпир нумай ҫулсем хушши пурăнма сывлăх сунатпăр. Пире тăшмана татăклăнах ҫĕнтермешкĕн ертсе пырăр!

Сывă пултăр пирĕн нумай нацилле аслă ҫĕршыв!

Сывă пултăр чаплă Хĕрлĕ Ҫар—халăхсене ирĕке кăларакан Ҫар!

Сывă пултăр пирĕн юратнă тăван учитель тата ҫулпуҫ аслă Сталин!

Чăваш республики 25 ҫул тултарнине социализмлă ҫĕрĕҫĕнче ҫĕнĕ ҫитĕнÿсем тунипе кĕтсе илер!

Чăваш республикинчи ялхуҫалăх работникĕсен канашлăвĕ республикăри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене тата ялхуҫалăх специалисчĕсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем! Эпир кăҫалхи июнĕн 24-мĕшĕнче Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики 25 ҫул тултарнине уявласа ирттеретпĕр. Аслă Ленин Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикине тăвасси ҫинчен историллĕ декрета алă пуснăранпа 25 ҫул тулать.

Ҫак чаплă уява пирĕн республикăри ĕҫыннисем Хĕрлĕ Ҫар фронтра историллĕ аслă ҫĕнтерÿсем тунă вăхăтра, пирĕн тăван ҫĕршывăн никама пăхăнманлăхĕ ҫине тапăннă фашистла нимĕҫ захватчикĕсене вăйлăн аркатса пынă вăхăтра уявласа ирттереççĕ.

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Ҫар фашистла нимĕҫ захватчикĕсене советăн таса ҫĕрĕ ҫинчен хăваласа кăларчĕ те вăрҫа тăшман ҫĕрĕ ҫине куҫарчĕ. Фашистла тискер кайăка татăклăнах аркатса тăкас тата Берлин ҫине ҫĕнтерÿ ялавне ҫĕклесе лартас кун инҫе мар ĕнтĕ.

Фашистла нимĕҫ захватчикĕсене хирĕҫ пыракан Отечественнăй вăрҫă кунĕсенче чăваш ĕҫҫыннийĕсем хăйсем хамăрăн аслă Тăван ҫĕршывăн тÿрĕ кăмăллă патриочĕсем пулнине кăтартса пачĕҫ. Чăваш халăхĕн ывăлĕсем, Хĕрлĕ Ҫар ретĕнче тăрса, советлă Тăван ҫĕршывшăн вăя шеллемесĕр паттăррăн ҫапăҫаççĕ. Тăшмана хирĕҫ кĕрешсе паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Совет Правительстви чăваш халăхĕн 20 пин ытла ывăлĕпе хĕрне СССР орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăларĕ. Вĕсенчен чи хăюллисем, 35 ҫын, Совет Союз Геройĕн хисеплĕ ятне илме тивĕҫлĕ пулчĕҫ.

Фронтри чаплă ҫĕнтерÿсене Хĕрлĕ Ҫар пĕтĕм ҫĕршыв пулăшнипе, Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхсем пулăшнипе, совет тылĕ ҫирĕппине пула туса пырать.

1944 ҫулта орденлă Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем, вăрҫă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене ҫĕнтерсе пырса, ялхуҫалăх ĕҫĕсене ăнăҫлăн туса ирттерчĕҫ. Ҫакă вара тĕштырăсемпе ытти ялхуҫалăх культурисене пысăк тухăҫлăхпа туса илме, тырпул хатĕрлемелли плана тултарма, нумай колхозсенче вăрлăх фончĕсене ҫителĕклĕ таранах хывса хăварма тата колхозниксене ĕҫкунĕсем тăрăх чылай продуктсем валеҫме май пачĕ.

Пирĕн республикăри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем, государство умĕнчи хăйсен обязательствисене срокчен пурнăҫласа, Хĕрлĕ Ҫар фондне планран ирттерсе 640 пин пăт ытла тыră, 680 пин пăт ытла ҫĕрулмипе пахча-ҫимĕҫсем пачĕҫ.

Колхозлă ялта, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту—колхозниксен ĕҫри ҫĕкленĕвĕн чĕрĕ ҫăлкуҫĕ—анлăн сарăлса кайрĕ. Ҫак ăмăртура Вăрнар районĕ мала тухрĕ. Районри колхозниксемпе колхозницăсен, мĕнпур ялхуҫалăх работникĕсен паттăр ĕҫне вĕсене Оборонăн Государственный Комитечĕн куҫса ҫÿрекен Хĕрлĕ Ялавне парса хисеп тунă.

Ялхуҫалăх ĕҫĕсене Шупашкар, Чурачăк, Красноармейски, Ҫĕрпÿ, Калинино, Етĕрне, Сĕнтĕр тата ытти чылай районсенчи колхозсем те ăнăҫлăн туса пычĕҫ.

Пирĕн республикăри ҫĕршер колхозсем иртнĕ ҫулта ялхуҫалăх культурисен тухăҫлăхне ÿстерес тĕлĕшпе панă заданисене чылай ирттерсе тултарчĕҫ. Вăрнар районĕнчи Ленин орденлĕ, Сталин ячĕпе тăракан колхоз гектартан вăтам шутпа 22 центнер тĕштырă туса илчĕ. Ҫак колхозри Леонтьев юлташ ертсе пыракан бригада кашни гектартан 35,4 центнер тыră туса илчĕ. Улатăр районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз кашни гектартан 260 центнер ҫĕрулми пухса илчĕ.

Республикăри колхозсем пахча-ҫимĕҫ туса илес ĕҫре те чылай пысăк ҫитĕнÿсем турĕҫ. Красноармейски районри «Унгастрой» колхоз тата Сĕнтĕр районĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 380-шар центнер купăста пухса илчĕҫ.

Колхозри обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетессишĕн пынă ăмăртура Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем мала тухрĕҫ, вĕсем Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕҫлĕ пулчĕҫ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ҫавăн пекех Ҫĕрпÿ, Октябрьски, Чурачăк тата Калинино районĕсенчи колхозсем те лайăх ĕҫлерĕҫ.

Ҫĕрпÿ районĕнчи «Емĕт» колхоз, Октябрьски районри «Аниш» колхоз, Ишлей районĕнчи «Пархикасси» колхоз, Калинино районĕнчи «Броневик» колхоз, Сĕнтĕр районĕнчи «Новый путь» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ăнăҫлăн тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăҫлăхне ÿстернĕшĕн Чăваш АССР Совнаркомĕн куҫса ҫÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕҫ.

Иртнĕ ҫулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕҫлекен уйрăм работниксем те нумайĕшĕ пысăк ҫитĕнÿсем турĕҫ. Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозри пăрусене пăхакан К. Г. Григорьева юлташ 32 пăру илсе пăхса ÿстерчĕ. Калинино районĕнчи «Броневик» колхозри аслă конюх М. Ф. Федоров юлташ Отечественнăй вăрҫă ҫулĕсенче 28 кĕсререн 82 тиха илсе ÿстерчĕ. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри сурăхсене пăхакан П. Е. Емельянов юлташ кашни 100 сурăхран 113 путек илнĕ. Сĕнтĕр районĕнчи Фрунзе ячĕпе тăракан колхозри сыснасене пăхакан К. Одинцова юлташ 10 сыснаран 17-шер ҫăвăр илсе пăхса ÿстернĕ, икĕ ҫул хушшинче вара вăл 289 ҫăвăр пăхса ÿстернĕ.

Республикăри машинно-тракторнăй станцисем те иртнĕ ҫултинчен нумай лайăхрах ĕҫлерĕҫ. Вăрнар, Йĕпреҫ, Шăхасан, Комсомольски, Елчĕк МТС-ĕсем, ҫавăн пекех тата иртнĕ ҫулсенче юлса пынă Ҫĕрпÿ, Куславкка тата Чкаловски МТС-ĕсем тракторсемпе ĕҫлемелли ҫулталăкри плана тултарчĕҫ.

Анчах та тунă ҫитĕнÿсемпе лăпланса ларни тата хамăр ĕҫри пысăк ҫитменлĕхсене курмасăр тăни пысăк йăнăш пулĕччĕ. Пирĕн халĕ ҫителĕксĕр ĕҫлекен районсемпе колхозсем те пур-ха, вĕсем, пĕр пек условирех пурăнаççĕ пулин те, ҫулсеренех сахал тырпул пухса илеççĕ тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăҫа кĕртессишĕн ҫителĕксĕр кĕрешеççĕ.

Вăрҫă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш ҫураки — ялхуҫалăх ҫулĕнчи чи ответлă тапхăр ҫывхарса килет. Ҫуракине ăнăҫлăн туса ирттернинчен ҫитес ҫулхи тырпул тухăҫлăхĕ килет. Ҫавăнпа та кашни колхозникпе колхозницăн, кашни трактористпа комбайнерăн, ялхуҫалăхĕнчи мĕнпур работниксен ҫакна ăнланса илмелле те хăйсен пĕтĕм вăйне ҫурхи ака ĕҫĕсене ăнăҫлăн хатĕрленсе ирттерме, пысăк тухăҫлă тырпулшăн кĕрешме мобилизацилемелле. Вăйлă тырпул хăй тĕллĕнех пулмасть, ăна куллен тимлĕн ĕҫленипе ҫĕнтерсе илмелле. Ҫавăнпа та эпир хĕлле мĕн чухлĕ хастарлăнрах ĕҫлĕпĕр, пире ҫуркунне ҫавăн чухлĕ ҫăмăлрах пулĕ, пирĕн кĕр илемĕ ҫавăн чухлĕ савăнăҫлăрах пулĕ.

Республикăри малта пыракан колхозсем ҫуракине хатĕрленес ĕҫе вĕҫлесе ҫитереҫҫĕ ĕнтĕ. Анчах нумайĕшĕн халĕ, ҫуракине пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе кĕтсе илес тесен, ҫине тăрса тата ывăнма пĕлмесĕр ĕҫлемелле-ха. Ҫуракине хатĕрленсе ҫитесси вара чылай енчен колхозсен руководителĕсем колхозниксемпе колхозницăсен ĕҫне тĕрĕс организацилеме пĕлнинчен, вĕсене вăйлă тырпулшăн кĕрешмешкĕн мобилизацилеме пултарнинчен килет.

Пĕр кун та вăраха ямасăр, ҫураки валли вăрлăх хатĕрлемелле: ăна ҫителĕклĕ чухлĕ хывмалла, тасатмалла тата унăн пахалăхне тĕрĕслемелле. Ҫапах та, уйрăм колхозсенче халĕ вăрлăх хатĕрлессишĕн кирлĕ пек тăрăшмаççĕ-ха, ҫавна пула вĕсен халĕччен те вăрлăх ҫителĕклĕ мар. Тĕштырă, техникăллă культурăсем, ҫĕрулмипе пахча-ҫимĕҫ вăрлăхĕсене халех шыраса тупас пулать, колхозсем хушшинче вăрлăх улăштарса илессине тата колхозниксенчен вăрлăхлăх тыră пухассине организацилес пулать.

Нумай колхозсен ĕҫĕнчи пысăк ҫитменлĕх вăл—нумай ҫул ÿсекен курăксем акмалли плана тултарманни пулать. Ҫакă вара пусуҫаврăнăшне пăсасси патне илсе пырать, тăпран пахалăхне, тырпул тухăҫлăхне чакарать тата выльăх-чĕрлĕх валли апат ҫителĕксĕр пуласси патне илсе пырать. Пур колхозсенче те клевер, люцерна тата ытти курăксен вăрлăхĕсене тупса, ҫителĕклех хатĕрлемелле, ҫавăнпа та вăрлăхлăх акса илнĕ курăксене ҫапас тата шĕкĕлчес ĕҫе халех вĕҫлемелле.

Ҫураки валли тĕрлĕ инвентарьсемпе ялхуҫалăх машинисене пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе хумалла, юсав пахалăхне тĕплĕн тĕрĕслемелле тата тракторсемпе машинăсене трактористсем, сухаҫăсем тата акакансем ҫумне ҫирĕплетсе памалла.

Чĕрĕ турттăм вăйне ҫураки валли хатĕрлес ĕҫ ҫине уйрăмах тимлĕн ҫавăрăнса пăхмалла. Вăйсăр тата ырханланса кайнă лашасене халех вăйлă апат ҫине тăратмалла, лашасене пăхса усрас тата вĕсемпе усă курас ĕҫри обезличкăна пĕтермелле, вĕсене ҫураки вăхăтĕнче ҫитерме лайăх апат уйăрса хумалла. Кашни лаша валли хăмăт, ĕнерчĕк тата ытти хатĕрсем тĕплĕн хатĕрлесе йĕркелесе хумалла. Кашни колхозрах вăкăрсене тата сĕт сахал паракан ĕнесене уйăрса, вĕсене кÿлсе ĕҫлеме вĕрентмелле.

Ҫĕмĕрле комбиначĕн коллективĕ пуҫарса янипе республикăри промышленность предприятийĕсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем Чăваш республики 25 ҫул тултарнă ятпа пуҫланнă социализмлă ăмăртăва хутшăнаççĕ. Ялхуҫалăх работникĕсен республикăри канашлăвĕ колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсене, ялхуҫалăхĕнчи мĕнпур специалистсене ҫак патриотла пуҫарăва ырласа йышăнма тата республика 25 ҫул тултарнă ятпа пуҫланнă социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнет.

(Вĕҫĕ 2-мĕш страницăра).

Канашлу дневникĕ

Республикăри ялхуҫалăх работникĕсен канашлăвĕн каҫхи ларăвĕнче И. М. Чарыков юлташăн «Ҫуракине хатĕрленсе ирттересси ҫинчен» тунă докладĕ тăрăх пренисем пычĕҫ. Пренире республикăри малта пыракан колхозсен председателĕсем, бригадирсем, ялхуҫалăх специалисчĕсем тата ытти работниксем хăйсен ĕҫĕ ҫинчен каласа пачĕҫ, кăҫал татах та лайăхрах ĕҫлеме пулчĕҫ.

Элĕк районĕнчи «Труд» колхозăн председателĕ Быков юлташ хăйĕн колхозĕ ҫуракине хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕҫлени ҫинчен каласа пачĕ. Ҫак колхоз ҫуракине лайăх хатĕрленнĕ, ҫав вăхăтрах вăрлăх ҫитмен колхозсене пулăшас майпа 30 центнер тыră панă.

Советски районри ҫĕрĕҫ пайĕн главнăй агрономĕ Дмитриев юлташ пусуҫаврăнăшне пăсмасăр ĕҫлени ҫинчен каласа пачĕ. Ҫак районри «Сеятель» колхоз курăк акмалли плана яланах пурнăҫласа пырать, ҫавна пула колхоз тыră тухăҫлăхне ҫултан ҫул ÿстерсе пырать. Ҫав вăхăтрах нумай ҫул хушши ÿсекен курăксене хисеплемен колхозсем тĕштырăсем те сахал туса илеççĕ.

Мари АССР-ĕнчен килнĕ делегаци руководителĕ Долганов юлташ канашлура пысăк сăмах тухса каларĕ. Вăл юлашки ҫулсенче икĕ республика хушшинче пыракан ăмăртура Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем тата ялхуҫалăх работникĕсем яланах мала тухса пыни ҫинчен каларĕ. Мари республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем умне 1945 ҫулхи социализмлă ăмăртура мала тухас задача лартрĕҫ,—тет Долганов юлташ. Малалла вăл иртнĕ ҫул Мари республикинчи чылай колхозсем вăйлă тырпул туса илни ҫинчен, государство умĕнчи обязательствăсене ăнăҫлăн пурнăҫланă хыҫҫăн планран ирттерсе Хĕрлĕ Ҫар фондне нумай тырпул тата ытти ялхуҫалăх продукчĕсем пани ҫинчен каласа пачĕ.

— Кăҫал иртнĕ ҫулхинчен лайăхрах ĕҫлеме пур условисем те ҫителĕклĕ, — тет Долганов юлташ.—Кĕрхи ҫĕртмене иртнĕ ҫулхисенчен нумайрах тунă, тракторсене юсасси тата вăрлăхлăх тыră хывасси те нумай лайăхрах пырать. Мари республикинчи ялхуҫалăх работникĕсен канашлăвĕ пысăк тухăҫлă тырпул туса илессине тата тыră хатĕрлес тĕлĕшпе те конкретнăй обязательствăсем илчĕ. Вăл обязательствăсене эпир чыслăн пурнăҫлăпăр.

Юлашкинчен Долганов юлташ Мари республикинчи колхозниксемпе колхозницăсен ячĕпе Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсемпе трактористкăсене 1945 ҫулта ҫĕнĕ ҫитĕнÿсем тума сунчĕ.

Чăваш АССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссарĕн заместителĕ И. В. Троицкий юлташ лашасене пăхасси, вĕсемпе усă курасси тата ĕрчетесси ҫинчен каларĕ.

Советски районри малта пыракан «Сеятель» колхозăн председателĕ Андреев юлташ вăйлă тырпул туса илессишĕн ҫав колхоз мĕнле кĕрешни ҫинчен, ҫавăн пекех ҫуракине хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕҫлени ҫинчен каласа пачĕ.

ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ Л. Михайлов юлташ тыră тухăҫлăхне ÿстерес тĕлĕшпе комсомолецсемпе колхоз ҫамрăкĕсем умĕнче тăракан задачăсем ҫинчен чарăнса тăчĕ. Социализмлă ҫĕрĕҫĕн ҫамрăк мастерĕсене 1945-мĕш ялхуҫалăх ҫулĕнче ҫĕнĕ ҫитĕнÿсемшĕн пĕтĕм вăя хурса ĕҫлеме чĕнчĕ.

Елчĕк районĕнчи «Автогигант» колхозăн председателĕ Н. В. Игнатьев юлташ канашлăва техникăллă культура — коксагыз туса илес ĕҫри пахă опытпа паллаштарчĕ. Иртнĕ ҫул,—тет Игнатьев юлташ,—кок-сагыз тымарне эпир государствăна 25.000 тенкĕлĕх патăмăр, ҫакăншăн пире, ытти тĕрлĕ промтаварсене шутламасăр, резина калушсем кăна 200 мăшăр ытла пачĕҫ. Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем 1945 ҫулта кок-сагыз плантацине татах та пысăклатма, унăн тухăҫлăхне ÿстерме йышăнчĕҫ. Хамăр илнĕ обязательствăна эпир пурнăҫа кĕртме пултаратпăр, пурнăҫа кĕртетпĕр те,—тет Игнатьев юлташ

Канашлу участникĕсем пысăк хаваслăхпа Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ аслă Сталин патне саламлă ҫыру яма тăваллăн алă ҫупса йышăнчĕҫ.

Республикăри ялхуҫалăх работникĕсен канашлăвĕ, пĕр кăмăллă пулса, Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене ҫыру яма йышăнчĕ. Ҫав ҫырура вăл Чăваш республики 25 ҫул тултарнине социализмлă ялхуҫалăхĕнче ҫĕнĕ ҫитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме чĕнчĕ.

Ҫакăнпа республикăри ялхуҫалăх работникĕсен канашлăвĕ хăйĕн ĕҫне вĕҫлерĕ.

Чăваш республикинчи ялхуçалăх работникĕсен канашлăвĕ чĕнсе калани

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

Республика 25 çул тултарнă ятпа пуçланнă социализмлă ăмăртăва хутшăнса ялхуçалăх ĕçĕсен планне пĕтĕмпех тата ирттерсе тултарассишĕн, 1945 çулта обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн Мари республикипе ăмăртса ĕçлеме тытăнса, Чăваш республикинчи ялхуçалăх работникĕсен канашлăвĕ мĕнпур колхозникĕсемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене, республикăри ялхуçалăх специалисчĕсене çак обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешӳ пуçарса яма чĕнет:

1. Тĕштырă культурисене гектартан 13 центнертан кая мар, йĕтĕн сӳсĕ—3,4 центнер, кантăр сӳсĕ—4 центнер, махорка—11,5 центнер, çĕрулми—120 центнер туса илмелле.

Çак шутпа, уйхир ĕçĕсене пурне те пысăк пахалăхпа, агротехникăна пăхăнса туса ирттермелле, ир акмалли тĕштырă культурисене 10—12 кун хушшинче акса пĕтермелле.

2. Выранти удобренисем хатĕрлесе хире кăлармалли плана кашни колхозăн тултармалла, республикăра пĕтĕмпе хире 2 миллион тоннăран кая мар тислĕк, 150 пин тонна торф, 90 пин центнер кĕл тата 10 пин центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ кăлармалла.

3. Тĕштырă культурисене 25 процентран кая мар тата çĕрулмин 20 процентне яровизациленĕ вăрлăхпа лартса хăвармалла, кĕртыррисемпе çуртыррисене 10 процент чухлĕ лаптăк çинче апат памалла.

4. Кашни колхозрах тата кашни культура тăрăх вăрлăх участокĕсем валли ялан усă курма çĕр уйăрса памалла, унта агротехникăна çирĕппĕн пăхăнса ĕçлемелле. Кăçал кашни колхозрах кĕртыррисен çулран çула куçса пыракан вăрлăх фондне хывса хăвармалла. Кашни колхозрах курăк акас тĕлĕшпе государство панă плана пурнăçа кĕртмелле.

5. Таса çĕртме тата кĕрхи çĕртме тумалли плансене кашни колхозрах обязательнăй йĕркепе тата агротехникăллă лайăх срокренче тултармалла; 1946 çулта çуртыррисене кĕрхи çĕртме тунă çĕр çине, 1945 çулхи кĕртыррисене вара таса çĕртме тунă çĕр çине акса хăвармалла. 1945 çулран пуçласа, кашни колхозрах тырпулсене пусуçаврăнăшĕнче тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла, малашне культурăсем йĕркесĕр черетленсе пыни тата пусуçаврăнăшне пăсни пулмалла мар.

6. Тракторсене, вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене тата лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарĕсене апрелĕн 16-мĕшĕ тĕлне, комбайнсене, молотилкăсене тата тырпул пухса кĕртмелли ытти машинăсене июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтермелле.

7. Тракторсемпе ĕçлес тĕлĕшпе государство панă плана пурнăçа кĕртсе, кашни 15 лаша вăйлă тракторпа вăтамран 350-шар гектартан кая мар, кашни комбайнпа 140 гектар ĕçлемелле тата тракторпа ĕçлекен молотилкăпа 450 тонна тĕштырă çапса илмелле. Тракторпа ĕçленин хăйне пуракан хакне тата горючи тăкаклассине 5 процент чухлĕ чакармалла.

8. Кĕртыррисене 10 кун хушшинче, çурхи тырăсене 15 кун хушшинче вырса пĕтермелле; утă пухса кĕртес ĕçе тырă вырас ĕç пуçланиччен 10 кун малтан вĕçлемелле.

9. Капан тăвас ĕçе тырă вырма тытăннă хыççăн 5-мĕш кунĕнче пуçламалла тата ăна тырă вырса пĕтернĕ хыççăн 10 кунран кая юлмасăр вĕçлемелле.

10. Авăн çапас ĕçе тырă вырма пуçланă хыççăн 3—5-мĕш кунĕнче пуçламалла та ноябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлемелле. Вăрлăхлăх акнă нумай çул ӳсекен курăксене çапас ĕçе вĕсене вырса пуçтарнă хыççăнах пуçламалла та уборка вĕçленнĕ хыççăн 20 кунран кая юлмасăр вĕçлемелле.

11. Кĕртыррисене лайăх ĕçлесе тата çемçетсе хатĕрленĕ, çĕртме тунă çĕр çине акса хăвармалла, вĕсене акас ĕçе августăн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлемелле.

12. Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли пур обязательствăсене те срокчен, Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă тĕле пурнăçа кĕртмелле.

13. Государствăн обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстермелли заданисене кашни колхозах тултармалла.

14. Кашни 110 ĕнепе тына пăру пуçне 85 пăру, кашни 100 сурăх пуçне 110 путек тата кашни ама сыснаран вăтам шутпа 10 çăвăр илсе пăхса ӳстермелле. 100 кĕсререн 50 тихаран кая мар илсе пăхса ӳстермелле. Тăрантаракан кашни ĕнерен 1000 литртан кая мар сĕт суса илмелле, кашни сурăхран вăтам шутпа 2,3 килограмм çăм касса илмелле. Обществăллă выльăхсем валли апат çителĕклĕ хатĕрлемелле. 140 пин тоннăран кая мар силос хывса хăвармалла тата выльăх апачĕ валли фермăсенче ĕçлекен работниксен вăйĕпе кашни колхозрах 3—5 гектартан кая мар тĕрлĕ культурăсем акса хăвармалла.

15. Хурт-хăмăр ĕрчетмен колхозсенче пуринче те 10—15 çемье пыл хурчĕ туянса улăрсем тумалла тата хур-кăвакалсен фермисене организацилемелле, çакна май кашни колхозрах 1945 çулта 10—15 пуçран кая мар хур-кăвакал туянмалла.

16. Ялхуçалăх ĕçĕсенче колхозсемпе колхозниксен майракаллă шултăра выльăхĕсемпе анлăн усă курмалла. Ĕçлекен вăкăрсем ӳстерме тата колхозсемпе колхозниксен ĕнисене ĕçе явăçтарма панă задание кашни колхозăнах тултармалла.

17. Кашни колхозрах 2—3 гектартан кая мар улма йывăççисемпе çырла йывăççисем лартса хăвармалла. Колхозниксен кил вырăнĕсенче 10—15-шер улма йывăççи тата 30—40-шер тĕм çырла йывăççи лартса хăвармалла.

18. Çураки ĕçĕсем пуçланиччен механизаторла кадрсем 1.300 çынран кая мар вĕрентсе хатĕрлемелле тата, кĕске срокла курссенче вĕрентсе, колхозсен массăллă квалификациллĕ кадрĕсене—уйхир бригадисен бригадирĕсене, ферма заведующийĕсене, звеньевойсене—10 пин çынран кая мар хатĕрлемелле.

Юлташсем! фашистла нимĕç захватчикĕсене татăкланах çĕнтересси халĕ ĕнтĕ инçе мар. Анчах хамăр татăкланах çĕнтерес куна хăвăртрах çывхартас тесен, фронта пулăшассине вăйлатма колхозлă ялăн пĕтĕм вăйне мобилизацилемелле.

Пирĕн çулпуç Сталин юлташ чĕнни çине ответлесе, çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе ирттерессишĕн тата 1945 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярар. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухар!

Чăваш республики 25 çул тултарнин мухтавлă юбилейне çуракине кăтартуллăн хатĕрленнипе тата çурхи уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттернипе, республикăри халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те çĕнĕ те пысăк çĕнтерӳсем тунипе паллă тăвар!

Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ—пирĕн халăха ылханлă тăшмана хирĕç кĕрешме хавхалантарса тата организацилесе пыракан!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç тата учитель, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ аслă Сталин!

Чĕнсе калание ялхуçалăх работникĕсен республикăри канашлăвĕнче 1945 çулхи мартăн 23-мĕшĕнче йышăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 23-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 23-мĕшĕнче БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем ХАЙЛИГЕНБАЙЛЬ хули районĕнче Фриш Гаф заливĕ хĕррипе хĕстерсе лартнă нимĕç çарĕсен ушкăнне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Мартăн 22-мĕшĕнче ку районри фронт çарĕсем 1.600 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах ДАНЦИГ хули еннелле наступлени туса пынă. ЦОППОТ хулине туртса илнĕ те ГДЫНЯ хулипе ДАНЦИГ хули хушшинче Данциг бухти хĕррине тухнă, çапла вара, нимĕçсен группировкине икĕ пая уйăрса янă, çавăн пекех тата АРТШАУ, ГРОСС БЕЛЬКАУ, ЛЕБЛАУ, ШЕФЕРАЙ, ШМИРАУ, МАРИЕНТАЛЬ, ШТАЙНФЛИС, ШТОЛЦЕНФЕЛЬС, ГРЕНЦФЛИС, КОЛИБКЕН ялĕсене йышăннă. Мартăн 22-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем 1.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Силезире, РАТИБОР хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем, малалла талăнса пырса, ЕРНАУ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата ХЕЙДЕРСДОРФ, ЛИНДЕНДОРФ, ОППЕРСДОРФ, РИГЕРСДОРФ, ВАКЕНАУ, КРЕШЕНДОРФ, ШЛЕГЕНБЕРГ, БАДЕВИТЦ, НОЙДОРФ, ХОНДОРФ ялĕсене йышăннă. Мартăн 22-мĕшĕнче УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем 1.600 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Мартăн 22-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 156 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 149 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ДАНЦИГ, МОРАВСКА ОСТРАВА ТАТА ПАПА ХУЛИСЕНЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Мартăн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн йывăр бомбардировщиксем Данциг чугун çул узелĕпе портне, Чехословакири Моравска Острава чугун çул узелне тата Венгрири Папа чугун çул узелне пырса çапнă. Бомбăсем пырса пăрахнине пула, Данциг чугун çул узелĕпе портĕнче 30 тĕлте ытла пушар тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Моравска Острава чугун çул узелĕнче пушарсем тухнă, нимĕç çарĕсен эшелонĕсем хушшинче взрывсем пулнă.

Папа чугун çул узелĕнче бомбăсем пакгаузсемпе горючи склачĕсене тӳрех пырса тивнĕ те, вăйлă пушарсем тухнă. Тул çутăлса килнĕ тĕлелле Папа хулипе чугун çул узелне тапкăшпех хура тĕтĕм ярса илнĕ.

Чăваш халăхĕн чаплă юрăçи

(К. В. Иванов вилнĕренпе 30 çул тултарнă май)

Чăваш халăхĕ хушшинче «Нарспи» поэмăна пĕлмен çын çук тесессĕн йăнăш пулмасть. Хăйсем вулама пĕлмен çынсем те Нарспи ятлă чипер хĕрĕн инкеклĕ пурнăçĕ çинчен ыттисем вуласа е каласа панă тăрăх пĕлеççĕ. Халĕ ĕнтĕ, «Нарспи» поэмăна икĕ хутчен вырăсла, унтан тутарла, мăкшăлла, удмуртла, марилле куçарса кăларнă хыççăн, çав чаплă поэмăна пирĕн аслă çĕршыври ытти нумай халăхсем те юратса вулаççĕ.

Çулсем иртсе пыраççĕ, анчах аслă поэтпа халăх хушшинчи çыхăну пĕрре те сӳрĕкленмест, вăл ытларах çирĕпленсе пырать.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче ылханлă тăшманпа паттăррăн çапăçакан чăваш халăхĕн ывăлĕсем «Нарспи» поэмăна хăйсемпе пĕрле илсе çӳреççĕ. Мĕншĕн тесен, Иванов поэминчи геройсем Сетнерпе Нарспи тĕттĕмлĕхпе чуралăх саманине хирĕç кĕрешнĕ. Паян çав тискер чуралăха каялла тавăрма хăтланакан нимĕç фашисчĕсене хирĕç кĕрешсе, пирĕн паттăр воинсем Сетнерпе Нарспи сăнарĕсенче хăйсен авалхи паттăр тăванĕсемпе тусĕсене кураççĕ. Çакăнпа ĕнтĕ, чăн малтан, К. В. Иванов поэмин вилĕмсĕр хăвачĕ палăрса тăрать.

Алла тин кĕнеке тытакан шкул ачисем «Чĕкеç» ятлă сăвва пăхмасăр калама вĕренеççĕ. Çак сăвă чăваш букварĕсенче Октябрьти революциччен пичетленсе пынă, вăл вара пирĕн саманара та букварьсенчен тухман. Ăна темиçе ăру пăхмасăр калама вĕренсе пынă. Отечественнăй аслă вăрçă пуçлансан, эпир çав сăвăри сăмахсене уйрăмах çивĕччĕн аса илтĕмĕр. Мĕншĕн тесен, эпир, çав сăвăри ĕçчен чĕкеç пекех канма пĕлмесĕр ĕçлесе, хамăра валли савăнăçлă пурнăç тунăччĕ, анчах пирĕн халăх тар юхтарса тунă чаплă хуласемпе чечекленекен ялсене аркатма, çаратма ирсĕр тăшман килсе кĕчĕ. Тăшман çав тери сĕмсĕр ĕмĕт тытнăччĕ, вăл пире хамăрăн тăван чĕлхене—чĕкеç юрри пек илтĕнекен чĕлхене мантарса, чура туса, хăй пек йытăлла вĕрме вĕрентесшĕнччĕ, хăйне парăнманнисене вĕлерсе пĕтерме хапсăнатчĕ. Эпир çав ирсĕр тăшмана хирĕç хаяр кĕрешĕве тухрăмăр. Халĕ ак пирĕн чăваш халăхĕн ывăлĕсем, ытти тăванла халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле алла-аллăн тăрса, фашистла тискер кайăка хăйĕн йăвинче аркатаççĕ. Вĕсем тăшман виллисем урлă Берлин çинелле çул хываççĕ.

«Чĕкеç» ятлă сăввăн, çавăн пекех пирĕн чĕресене ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлнă ытти чылай сăвă-юрăсен—«Сăпка юрри», «Çулталăк хушши», «Хальхи самана», «Выçă аптăранисем», «Усал шăрăх», «Ватă вăрман шухăшĕ» ятлă произведенисен—авторĕ К. В. Иванов пулнине эпир вăрçă умĕн пĕр çул малтан аслă поэт çуралнăранпа 50 çул тултарнине уявланă чухне пĕлтĕмĕр. Вĕсенче пуринче те эпир «Нарспи» поэмăри пекех, халăх чунĕ, халăх шухăш-кăмăлĕ вĕресе тăнине, Константин Васильевич чăннипех те халăхăн аслă ывăлĕ пулнине куртăмăр. Халăх тăшманĕсем—буржуаллă националистсем поэт пуçĕ çине купаласа пынă хура элек сирĕлчĕ, пирĕн куç умне Ивановăн таса та çутă сăнарĕ тухса тăчĕ.

Константин Васильевич кунçулĕ питĕ кĕске пулнă. Вăл 1890 çулта çуралнă та 1915 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче вилнĕ. Анчах çирĕм пилĕк çул кăна пурăнса ирттернĕ поэт халăхшăн çав тери чаплă ĕçсем туса хăварма ĕлкĕрнĕ.

Поэт пурăннă пулсан, халĕ вăл 55 çул та тултарман вăйпитти çын, пирĕнпе пĕрле ĕçлекен, кĕрешекен çын, пурнăç пурăнса курнă таран ăс-хакăллă писатель пулнă пулĕччĕ. Анчах ăна патша вăхăтĕнчи йывăр самана, çамрăк хунава йывăр чул хуçса ӳкернĕ пекех, хуçса антарнă. Çапах та вăл, хăйĕн произведенийĕсенче этем тивĕçлĕхĕпе ирĕклĕхĕшĕн, этемме этем пусмăрланине хирĕç, чуралăха хирĕç, хĕрарăма выльăхла сутнине хирĕç хастарлăн кĕрешнĕскер, паянхи паттăрсен—хамăр тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçакан халăх ывăлĕсен ретне тăрать.

Эпир Ивановăн усăмлă та витĕмлĕ произведенийĕсене вуланă чухне яланах поэтăн çав тери тĕлĕнмелле хăвачĕ ăçтан çăлкуçланса тухнине, унăн произведенийĕсем пире мĕншĕн çавăн пек пĕтĕм чун-чĕререн хумхантарнине пĕлме тăрăшатпăр.

Константин Васильевичăн пысăк талант пулнă. Анчах поэта çакă çеç çителĕксĕр-ха. Çав таланта ӳсме, аталанма тивĕçлĕ майсем кирлĕ. Аслă çĕртен пин-пин тымарсем тăрăх сĕткен илеймесен, темĕнле паха çырла йывăççи те хăрса каять. Ивановăн таланчĕ çĕр тĕрлĕ тымарсемпе пирĕн тăван халăхпа, унăн пултарулăхĕпе таччăн çыхăнса тăнă. Вăл халăха, тăван çĕршыва юратнă. Анчах вăл вăхăтри поэтшăн çакă та çителĕксĕр пулнă-ха. Мĕншĕн тесен, «халăхсен тĕрми» пулса тăракан патша Российинче халăх йывăр чуралăхра пăчăхса пурăннă. Халăха уçă сывлăш кирлĕ пулнă. Çав сывлăша ун чухне 1905—07 çулсенчи революци панă.

1903 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме пырса кĕнĕ Константин пĕтĕм чĕре хĕрӳлĕхĕпе «ăс пухма» тытăнать. Шкул директорĕ И. Я. Яковлев чăваш ачисене кĕнекене юратма вĕрентет. Çавăн çинчен поэт Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 40 çул тултарнине уявланă тĕле çырнă хăйĕн «Хальхи самана» ятлă сăввинче аван каласа панă:

Ырă чăваш тупăнчĕ,
Ырă ĕçе тытăнчĕ.
Чăн чăвашла сăмахпа
Хăй тăванне чăваша
Пырса çапрĕ чĕрине,
Пăлхатса ячĕ чĕрене.
Пăлхатниччен питĕрех
Шухăш ӳкрĕ пуç çине.
Çĕнĕ ĕмĕр мар-и çав?
Çĕнĕ пурнăç карĕ çав,
Пур çĕрте те ялсенче
Хура халăх хушшинче
Хут вĕренме тытăнчĕç,
Шкулсем нумай уçăлчĕç.
Вĕсен чĕри Чĕмпĕрте
Аслă чăваш шкулĕнче.
Кĕнекесем çаптарчĕç.
Çын хушшине салатрĕç.
Кĕçех ĕнтĕ чăвашсен
Уçăлаççĕ куçĕсем.

Иванов поэзийĕ çуралса тухни, чăваш литератури хăй çуралса тухни те, 1905—1907 çулсенчи революципе çыхăнса тăрать. Çав çулсенче чăваш чĕлхипе тĕн кĕнекисем мар, илемлĕ литература пичетлесе кăларма майсем тупăнаççĕ. Вырăссен классикăллă литературинчи прогрессиллĕ шухăшсем поэт пуçĕнче вăл вăхăтри революциллĕ шухăшсемпе пĕтĕçеççĕ, поэтăн демократиллĕ шухăшĕсем ӳссе çирĕпленеççĕ.

Поэтăн 1906 çулхи дневникĕнче эпир çакăн пек йĕркесене те тĕл пулатпăр:

Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрсмз, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине хăпарттăр!
Малалла, малалла, малалла!

1907 çулхи февраль уйăхĕнче Чĕмпĕр шкулĕн садĕнче митинг пулса иртет. Унта политикăллă сăмахсем тухса калаççĕ, революци юррисене юрлаççĕ. Иванов «Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!» тесе чĕнни, паллах, çамрăксен чĕрине пăлхатмасăр хăварма пултарайман. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна çав çулхи мартăн 8-мĕшĕнче Чĕмпĕр шкулĕнчен кăларса яраççĕ.

Çапла ĕнтĕ поэтăн пысăк таланчĕ революци хумĕсемпе хавхаланса çĕкленет. Çав тапхăрта вăраннă ирĕклĕх шухăшĕсем унăн мĕнпур произведенийĕсенче палăрса тăраççĕ. Чăн та, калăпăр, «Нарспи» поэмăра Иванов тӳрех революци тума чĕнни çук, анчах поэма хăйĕн пĕтĕм шухăшĕпе, пĕтĕм туйăмĕсемпе тĕттĕмлĕхпе чуралăх тĕнчине хирĕç, этем тивĕçлĕхне ирсĕррĕн таптанине хирĕç Сетнер пек, Нарспи пек хăюллăн кĕрешĕве тухма чĕнет. Анчах çав кĕрешӳ вăл танмар кĕрешӳ пулнă. Укçа тытăмĕ çинче никĕсленсе тăракан пурнăç йĕрки тĕп пулмасăр ĕçхалăхĕн телей пулма пултарайманнине Иванов лайăх чухланă. Капитализм саманинче укçа хыççăн хăваласа «шуйттан чурисем» пулса каякан уйрăм çынсене поэт «Шуйттан чури» ятлă хăйĕн çырма пуçланă трагедийĕн сыпăкĕнче питĕ витĕмлĕн кăтартса панă. Унта укçашăн тăванĕ тăванне те вĕлерет. Çавăн пек пулнă чуралăх самани. Акă, «Нарспи» поэмăра этем телейĕн тискер тăшманĕ — Тăхтаман пĕтет, кайран Михетере те вĕлереççĕ, анчах тăхтамансемпе михетерсен ирсĕр тĕнчи çавăнпах пĕтмест-ха. Сетнерпе Нарспи çав тискер тĕнче тыткăнĕнче вилеççĕ. Сакăнта тапах эпир Иванов пурăннă вăхăтри саманан сăн-сăпачĕ тĕрленсе юлнине куратпăр. Поэт хăйĕн поэмине 1908 çулта çырса пĕтернĕ. Вăл вăхăт тĕлне революцие пусарса лартаççĕ. Хура реакци тапхăрĕ килсе çапать. Ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăхăн чи лайăх ывăлĕсене тĕрмесене хупса хураççĕ. Ирĕклĕхе патша атти таптаса тăкать, ирĕклĕхĕн сассине хупласа хураççĕ. Çакă вăл поэт творчестви çине хăйĕн йĕрне хăвармасăр иртме пултарайман. Юлашки çичĕ çул хушшинче поэт хăйĕн юратнă ĕçĕпе—творчество ĕçĕпе ĕçлеме пачах та май тупаймасть. Анчах поэт хăйĕн «Нарспи» поэминче татса парайман ыйтăва историн малашнехи аталанăвĕ татса парать. Поэт хускатнă кĕрешӳ сасси çĕнĕ, революциллĕ самана çĕнĕ вăй-хăватпа çĕкленет.

Константин Иванов тăван чăваш халăхне, унăн сăвви-юррисене, унăн традицийĕсемпе йăлисене юратнă, çакăнпа пĕрлех вăл пĕтĕм тăван çĕршыва, вырăс халăхĕпе унăн литературине те чун-чĕререн кăмăлланă. Тăван çĕршывăн тăшманĕсемпе кĕрешме халăха хăватлă сасăпа чĕннĕ. Акă вăл «Тăлăх арăм» ятлă юмахла сăвăра çапла çырать:

Ырă чăваш тăвансем,
Пĕтчĕр сирĕн тăшмансем!
Çут хĕвелпе çут тĕнче
Вăй паччăр çак кунсенче.
Çичĕ тăван çапăçать...
Тăшман пуçне таптаса.
Вăрçă шавĕ шав кĕрлет,
Таврашри çĕр кисренет.
Çичĕ тăван çапăçать,
Çапăçать те туй тăвать;
Тăшман пуçĕ çĕмĕрлет,
Хура юнĕ сирпĕнет.

Çак сăвăри сăмахсем паян çырнă пекех илтĕнеççĕ. Вĕсем пирĕн паттăрсене паянхи тăшманпа хаяррăн çапăçма чĕнеççĕ. Паянхи паттăрсене совет çĕрĕ, çĕнĕ саманари «Çут хĕвелпе çут тĕнче» вăй парса тăрать, «Тăшман пуçĕ çĕмĕрлет, хура юнĕ сирпĕнет».

Поэт хăйĕн тĕп произведенийĕсенче — «Нарспи» поэмăра, «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм», «Икĕ хĕр» ятлă юмахсенче — чăваш хĕрарăмĕн ĕлĕкхи саманари йывăр кунçулĕ çинчен çырать. Мĕн тери савăннă пулĕччĕ поэт халĕ, совет саманинче, ирĕклĕ совет хĕрарăмĕ тăван çĕршыва хӳтĕленĕ çĕрте арçынпа пĕр танах кĕрешнине, çĕнĕ пурнăç тунă çĕрте пĕтĕм вăя хурса ĕçленине, хăй ĕçĕшĕн хĕпĕртенине курас пулсан!

Ивановăн талантне ӳсме, тăван халăх пултарулăхĕпе пĕрлех, вырăс халăхĕн пултарулăхĕпе вырăс писателĕсен творчестви нумай пулăшнă. Вăл Лермонтовăн «Калашник хуçа çинчен хунă юррине», «Тĕрме çынни», «Хумсемпе çынсем», «Парăс», «Пурнăç курки», «Тусен тăррисем», «Чул ту», «Пирĕшти» сăввисене, Некрасовăн — «Выçă юрă», Кольцовăн — «Тӳпене хĕвел», «Сивĕ çил вĕрет» ятлă сăввисене тĕлĕнмелле ăсталăхпа куçарнă. Çав произведенисем пирĕн тăван литературăна пуянлатса, илемлетсе тăраççĕ.

Пысăк произведенисенчи пекех, поэтăн пĕчĕк сăвви-юррисенче те («Хальхи самана», «Выçă аптăранисем», «Усал шăрăх», «Ватă вăрман шухăшĕ» т. ыт. те) халăх шухăшĕ, унăн хуйхипе савăнăçĕ, унăн пурнăçĕ палăрса тăрать. Тăван халăхăн нациллĕ тивĕçлĕхне пăсакан, халăх интересĕсене сутакан çынсене поэт ĕмĕр манмалла мар, витĕмлĕн питленĕ.

Анчах чăваш хушшинче
Чунĕ хытнă çынсем те
Тапаланма пуçларĕç,
Тăрса çапла каларĕç:
«Чаплă вырăн тупасчĕ,
Часрах улпут пуласчĕ...»
Тĕрлĕ çутă тӳммешĕн
Тинки тухать ак лешĕн:
Чăвашла та каласмасть,
Тăванне те астумасть;
Чĕри шăнса кайнă çав,
Чĕри вилле тухнă çав...

тесе çырать вăл пĕр сăввинче. Вăл пирĕн чăваш халăхĕн илемлĕ литературин никĕсне хывать, вăл пирĕн поэзин классикĕ пулса тăрать. Вăл—художник-живописец, вăл йывăçран алăпа пичетлемелли машина тăвать, столяр ĕçĕпе интересленет. Вăл хăйĕн дневникне пулас произведенисен—пьесăсен, комедисен, романсен планне ӳкерсе хурать. Анчах вилĕм ăна çав аслă плансене пурнăçа кĕртме памасть.

1915 çулта, пирĕн аслă поэт йывăр чирлесе выртнă вăхăтра, вырăс çарĕсем пирĕн çĕршывăн ĕмĕрхи тăшманне хирĕç—нимĕç империализмĕн çарне хирĕç çапăçаççĕ. Поэт мартăн хĕвеллĕ кунĕсенче ăмăрткайăкăнни пек куçĕсене хупать. Унăн ӳтне нӳрĕ тăпрапа витсе хурсан, поэта пытарма пынă çынсене «Нарспи» поэма пичетленнĕ кĕнекене валеçсе параççĕ. Çав аслă кĕнекере: «çакă çурă тĕнчере вăйли çук та этемрен, çĕрсем çинче, шыв çинче хуçа пулса вăл тăрать», тесе çырнă. Çак сăмахсенче поэтăн ĕмĕчĕ палăрса тăнă. Поэт хăй çĕршывĕн çынни çавăн пек тĕнчере чи вăйли пулса тăнине курма ĕмĕтленнĕ. Эпир, социализм саманинчи çынсем, совет çынни мĕн тери вăйлине куртăмăр. Совет çынни, ылханлă тăшмана аркатса, хăюллă та çирĕп утăмсемпе Берлин патнелле утать.

Аркадий ЭСХЕЛЬ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ИНВАЛИЧĔСЕНЕ ХАЛĂХ ПУЛĂШНИ

Свердловск облаçĕнче Отечественнăй вăрçă инвалиçĕсене пулăшмалли çирĕмкунлăх вĕçленнĕ. Выранти Советсен активисчĕсем, социальнăй обеспечени органĕсемпе пĕрле, инвалидсен пурнăçпа йăла условийĕсемпе паллашнă, тăван çĕршыва хӳтĕлекенсене мĕн çитменнине палăртнă. Вĕсене пысăк пулăшу панă. Сăмахран, 1.000 ăшă тумтир ытла, 2.500 мăшăр атă-пушмак панă. Нумайĕшне профтехшкулсене вĕренме янă.

Облаçра халĕ вăрçăран инвалид пулса таврăннă 600 çын предприяти директорĕсем тата цех начальникĕсем пулса ĕçлеççĕ. (ТАСС).

ТĂВАН ÇĔРШЫВА ТАВĂРĂННИ

Нимĕçсем Хĕвелтухăç Пруссие каторгăна хăваласа кайнă темиçе пин çын халь хăйсен тăван çĕршывне—Совет Латвине таврăнаççĕ.

Неман шывĕн çӳллĕ çыранĕнче, пĕрремĕш йышăну пунктĕнче, асапланса пĕтнĕ çынсем чикĕри çарсен боецĕсемпе, офицерĕсемпе калама çук савăнса тĕл пулаççĕ. Хĕрлĕ Çар вĕсене вилĕмрен çăлса хăварнă. Вĕсем каторгăра ирттен пуçласа тĕттĕм пуличченех ĕçленĕ. Вĕсене хĕнемесĕр пĕр кун та иртмен. Хĕненипе кашни кун темиçе вунă литовец вилнĕ.

Совет правительстви ирĕке тухнă литовецсемшĕн ашшĕ ывăлĕшĕн тăрăшнă пек тăрăшать. Вĕсем пыракан çул çинче вĕсене йышăнса эвакуацилекен пунктсем тунă. Çав пунктсенче вĕсене тумтир тата апат-çимĕç параççĕ. (ТАСС).

МОЛДАВИРЕ ЯЛХУÇАЛАХĔН МАССĂЛЛА КАДРĔСЕНЕ ХАТĔРЛЕНĔ

Молдавири ялсемпе колхозсенче ялхуçалăхĕн массăллă кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе кĕске сроклă курссем пулса иртнĕ. Вăл курссенче 20.000 çын вĕреннĕ. Курсра вĕреннисем хушшинче животноводсем, полеводсем тата виноградарьсем 3.000 çын ытла пулнă. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен çарĕсем Рейн шывĕн хĕвеланăç çыранĕнче нимĕçсен плацдармне хĕссе пыраççĕ. Союзниксем Рейн шывĕн хĕвеланăç çыранне Кобленцран пуçласа Людвигсхафена çити участокра контроллесе тăраççĕ. Анчах вĕсем çав участокра шыв хĕррине пур çĕрте те тухайман-ха. Союзниксен танковăй чăçĕсем Шпейер хулинчен 8 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата 11 километр хĕвеланăçнерехре тăраççĕ. Нейштадт хулинчен хĕвелтухăçнерехре тăшман вăйлăн хирĕç тăрать. Зигфрид линийĕн ытти секторĕсенче нимĕçсем вăйлă çапăçаççĕ, анчах союзниксем вăл укрепление тата темиçе тĕлте татнă.

Ремаген сывăхĕнчи хăйсен плацдармĕн районĕнче союзниксем тата темиçе пункта тасатнă, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе пырса, Хонне хулинчен кăнтăртарахра малалла куçса пыраççĕ.

Мартăн 21-мĕшĕнче хĕвеланăç фронтĕнче 16.400 çынна тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем мартăн 22-мĕшĕнче Майнц хулин тăватă пайĕнчен виçĕ пайне тасатнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 22-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Германие тапăннă. Бохольт, Дорстен тата Дюльмен хулисене йышлăн пырса тапăннă. Кунсăр пуçне, тăшманăн чугун çулĕсем çине тата Ганновер хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре 20 мильăра ларакан промышленноçлă Хильдесхейм хули çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши самолечĕсем Берлин çине 31-мĕш хут бомбăсем пырса пăрахнă.

ФИНЛЯНДИ ХАЛĂХĔН ДЕМОКРАТИЛЛĔ СОЮЗĔН ДЕКЛАРАЦИЙĔ

ХЕЛЬСИНКИ, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Енер «Вапаа сана» хаçат Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕн декларацине пичетлесе кăларнă. Декларацире çапла каланă:

«Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕ суйлавра питĕ пысăк çĕнтерӳ турĕ. Ку çĕнтерӳ вăл демократие хирĕç пыракан политикăна тата вăрçă политикине вăйлăн пырса çапни пулать. Суйлавсем халăх малашне мирпе демократи çулĕпе кайма шутланине, çав тĕллеве пурнăçа кĕртессишĕн вăл татăклă мерăсем йышăнма хатĕррине кăтартса пачĕç. Çаксене пурнăçа кĕртес тесен, пирĕн хамăрăн государство аппаратне тата обществăна уççăн е вăрттăн ĕçлекен фашистла çынсенчен халех тасатма тытăнмалла. Çав çынсем ĕнтĕ пирĕн çĕршывăн демократиллĕ йĕркепе хăрушсăрлăха хăратса тăма пултармалла мар.

Мирлĕ пурнăç туса хурасси Финлянди халăхĕшĕн пурăнмалли условисем пулса тăрать. Мир тăвасси вăрçăшăн айăплă çынсене ответ тыттарма хушать. Çакна тата çав çынсем пирĕн çĕршывăн никама пăхăнманлăхне тата эпир Совет Союзĕпе тата Пĕрлешӳллĕ ытти нацисемпе çыхăнса тăрассине урăх хăратма ан пултарччăр тесе те тумалла. Кунта тавăру çинчен сăмах та пулма пултараймасть, сăмах кунта преступниксене наказани парасси çинчен тата халăхăн пуласлăхĕпе унăн пурнăçне хăрушлăх умне илсе пыракан вăйсенчен хӳтĕлесси çинчен пырать».

Декларацире малалла çапла каланă: «Суйлавсенче политикăллă ыйтусем чи малти вырăнта тăнă пулсан та, вăл пирĕн союз социальнăй тата экономика ыйтăвĕсене манса кайнине, вăрçă пирки пулнă йывăрлăхсем социальнăй анлă мероприятисем туса ирттерме хушнине манса кайнине пĕлтермест. Пирĕн халăха экономика енчен кӳнĕ сиене саплас пулать. Вăл ĕçе чи малтан вăрçă вăхăтĕнче пуйса юлнă çынсен тата вăрçăшăн айăплă çынсен шучĕпе туса ирттермелле. Хăйсем ĕçлесе тунă пурлăха çухатнă çынсене вăрçă вăхăтĕнче курнă тăкаксене тӳлесе татмалла. Вăрçă валли укçа тупнă пулсан, юсав строительстви валли те, халăх пурнăçне экономика енчен хăпартма та укçа-тенкĕ тупăнмалла.

Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕ çĕнĕ сеймра чăн-чăн демократиллĕ фракцисем пурте пĕр-пĕрнипе килĕштерсе ĕçлемелле пултăр тесе шутлать. Çавăн пек килĕштерсе ĕçлени хамăр çĕршыва малашне çитĕнӳсем туса пыма кирлĕ. Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕ ыттисем çавăн пек тума тăрăшнине хапăл тăвĕ, хăй енчен вăл çавăн пек пĕрлешсе ĕçлеме тăрăшĕ. Чăн-чăн демократиллĕ организаци пулса тăрса, Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕ хăйĕн суйлавçисемпе яланах таччăн çыхăнса тăма шутлать. Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕн депутачĕсем хăйсен суйлавçисене сейм ĕçĕсем çинчен каласа пама, вĕсен критикине, вĕсен сĕнĕвĕсене шута илме пулаççĕ. Çапла тусан кăна демократи обществăри чĕрĕ вăй пулма пултарассине Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕ ăнланса тăрать».

Декларации çине Кай Сундстрем тата Тюне Тусминен алă пуснă.

ВЕНГРИРИ ÇĔР РЕФОРМИ

ДЕБРЕЦЕН, мартăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрире, çĕр реформи çинчен калакан декрета пурнăçлама пулăшас шутпа, çĕрсĕр тата сахал çĕрлĕ çынсен комитечĕсене туса хураççĕ. Декрет каланă тăрăх, помещиксен çĕр 1.000 хольдран (хольд—0,57 гектар) ытла пулсан, çавăн пек помещиксен пĕтĕм çĕрне тытса илмелле (укçа тӳлесе). 100 хольдран ытларах, анчах 1.000 хольдран сахалтарах пулсан, 100 хольдран ытлашши çĕрне укçа тӳлесе тытса илмелле. Хресчен çемьинчен тухнă, ялхуçалăх ĕçĕпе пурăнакан çынсен 200 хольда çити шутланакан çĕрне тытса илмелле мар.

Бальмазуйра çĕр кирлĕ çынсен комитетне туса хунă та ĕнтĕ. Вăл комитет ял чиккинче кĕрекен валеçмелли 3.400 хольд çĕре виçсе тухнă. Çĕр валеçнĕ чухне сухаласа хунă çĕре чи малтан упăшкисем çара кайнă хĕрарăмсене тата выльăх усраман хуçалăхсене пама йышăннă. Пĕр хольд çĕр те акмасăр ан юлтăр тесе, хресченсем çуркунне пĕтĕм çĕре, вăл шутра хуçисем пăрахнă çĕре те сухаласа акма сăмах панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 90550. Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000